

ОЧЕРК

Леонид МАЯКСЕМ

Вăрçă таптанă çамрăклăх

Шупашкарти Максимов урамĕнчи тăхăр хутлă капмар çуртра пурăнакансенчен чылайăшĕ пĕлет ăна. Хирĕç пулсан нихăшĕ те сывлăх сунмасăр иртмест. Хăшĕ-пĕри, гастрономран е пасартан тулли сумкăпа таврăннине курсан, пулăшма та хатĕр. Анчах та ватă хĕрарăм килĕшмест: «Çук-çук, хамах эпĕ. Тавах ырă кăмăлăршăн», – тет те малалла утать.

Унпа юлашки хут курнăçнă чухне, эпĕ мĕн тĕллевпе килнине пĕлсен, Ольга Степановна куçран тимлесе пăхрĕ те:

– Хисепленĕшĕн тавтапуç, анчах мĕн çырăн-ши ман çинчен? – терĕ. – Алла винтовка тытса çапăçман, паттăрла ĕç туман. Апла тăк сӳннĕ вучаха пăтратма кирлех-ши?

– Кирлĕ, Ольга Степановна, кирлĕ! – хĕрӳлентĕм эпĕ. – Хăвăршăн мар пулсан та, çамрăк ăрушăн. Эсир вут-çулăма хĕр пуççăн – хăвăр ирĕккĕн! – кĕни хăех паттăрлăх.

– Юрĕ, эппин, чăнласах та кăсăкланатăр пулсан каласа парам, – ассăн сывларĕ кил хуçи.

Сăмах çăмхи хуллен, асаплăн сӳтĕлчĕ. Эпĕ вара шухăш-кăмăлпа хам умра ларакан тăхăр вунна çывхарнă, çӳç-пуçĕ кăвакарса шуралнă хĕрарăмăн – тахçан хамăра хими вĕрентнĕ учительницăн – йывăр кунçулне йĕрлерĕм, вăл тӳссе ирттернине чун-чĕре витĕр каларма тăрăшрăм.

– ...Пĕр лав хуйхă-суйхă тиесе килнĕ хăрушă сăмах – «Вăрçă!» – ял тăрăх açтаха пек çĕмĕрттерсе çӳреме тытăннăранпа темиçе эрне иртрĕ ĕнтĕ. Çак хушăра унăн пĕлтерĕшне хĕрарăмсемпе ватăсем кăна мар, вĕтĕр-шакăр та лайăх пĕлсе çитрĕ. Куççульпе чыхăнакан амăшĕсемпе пĕрле вĕсем те фронта каякан ашшĕсемпе пиччĕшсем хыççăн укăлчана çитиех макăра-макăра чупрĕç.

Тин кăна-ха тулăх пурнăçпа, кулă-юрăпа кĕрлетчĕ Сиккасси, халĕ вара хура тутăр пĕркенчĕ, шăпланчĕ. Алла хĕç-пăшал тытма пултаракан арçынсем пурте тенĕ пекех вăрçă хирĕнче. Килçуртри тата пĕрлешӳллĕ хуçалăхри пĕтĕм ĕç-пуç хĕрарăмсемпе стариксем, тинтерех çеç сăмса шăлма вĕреннĕ шĕвĕрсем çине тиенчĕ.

Степан Матвеевич Чебуков та тăван ял-йышпа вăрçăн малтанхи кунĕсенчех сыв пуллашрĕ. Нумаях пулмасть вăтам шкул пĕтернĕ Ульха колхоз правленийĕнче бухгалтера пулăшать. Çемьере вăл – чи асли, ыттисем пĕринчен тепри вĕтĕ. Йăмăкĕ Марье чирлĕ, Çупук вуннăра кăна, Ваççа шкул çулне те çитмен-ха, Зоя тин кăна хăй тĕллĕн утма хăнăхать.

Правленирен таврăнсан Ульха кил-çуртра вĕткеленет. Пушăрах вăхăтра – хĕллехи вăрăм каçсенче – салтаксем валли алса-чăлха çыхать, табак енчĕкĕпе ал тутри тĕрлет, тантăшĕсемпе пĕрле – килĕрен киле çӳресе – ăшă тумтир пухать. Йывăр! Çапах та ахлатмасть, çăмăллăх шырамасть. Ара, пурнăçпа вилĕм тытăçнă вăхăтра епле алă усса ларăн-ха? Пурне те пысăк пĕр тĕллев – Тăван çĕр-шыва вăй çитнĕ таран пулăшасси – хавхалантарать.

1942 çулхи чӳк уйăхĕнче Ульхапа унăн виçĕ тантăшне – Шура Мурзуковăна, Мария Афанасьевăна тата Мария Миттовăна – Канаша, комсомол райкомне чĕнтерчĕç.

Йыхрав хучĕсене кăтартсан йышăну пӳлĕмĕнче ларакан çамрăк хĕрарăм çĕкленчĕ те:

– Вăт, хĕрсем, хитре кĕпене салтак гимнастеркипе улăштармалли вăхăт сирĕннĕн те çитрĕ, – терĕ пусăрăнчăк сасăпа. – Хăвăрах пĕлетĕр, лару-тăру йывăр. Фронтра – пур çĕрте те – юнлă çапăçусем пыраççĕ, унта кашни çын шутлă. Çавăнпа та... – секретарь сĕтел туртминчен çар комиссарĕ алă пусса çирĕплетнĕ повесткăсем кăларчĕ. – Иккĕленетĕр пулсан халех каларăк – хистеместпĕр сире, ӳкĕтлеместпĕр.

– Ыйтăва эпир такам хушнăран мар, хамăр ирĕккĕн çырнă, – терĕ Ульха кӳренерехчĕн.

– Каçарăр, – аван марланчĕ хĕрарăм, – хăвăра шелленĕрен кăна асăрхаттартăм...

...Хĕрсене ăсатма пĕтĕм ялйыш тухрĕ. Чылайăшĕ макăрать. Ара, епле тӳсĕн-ха куççуль кăлармасăр: вăйă выляма мар, çапăçма каяççĕ!

Ульхапа Шурăна, икĕ Марьерен уйăрса, Мускав облаçĕнчи тинтерех çеç йĕркеленĕ хĕрарăмсен полкне илсе кайрĕç. Хĕрсем пĕр ротăнах лекрĕç. Шел тульăк, нумаях пулаймарĕç пĕрле: темиçе уйăхран тантăшсен-ентешсен çул-йĕрĕ юпленчĕ: Ульхана Орел хулине – зенитчиксен полкне – илсе кайрĕç, оруди наводчикĕ туса хучĕç.

Виççĕмĕш расчетра тăватă çамрăк: икĕ хĕр, икĕ йĕкĕт. Сергей Алонычевпа Костя Складнев – Иваново каччисем. Тĕрĕссипе, вĕсене «каччă» теме те çук: иккĕшĕн çулĕсене пĕрле хушса шутласан та вăтăр çиччĕ çеç пулать! Анчах хăюлăх тени çамрăклăха пăхмасть иккен. Хĕрсен умĕнче юрату пирки çăвар уçма та именекенскерсем «Сывлăш!» команда пулсанах палламалла мар улшăнса хастарланаççĕ.

Туслă «çемьен» тăваттăмĕш членĕ – Ергунова. Лутра пӳсиллĕ, çивĕч чĕлхеллĕ Клава ача çуртĕнче ӳснĕ. Çаврăнăçуллăскер, уçă кăмăллăскер, Ульхана вăл пĕрре курсах килĕшрĕ. Икĕ хĕр хушшинче кĕçех çирĕп туслăх тымар ячĕ. Тӳпе «тăрă» чухне вĕсем пĕр-пĕр улахрах кĕтессе хĕсĕнеççĕ те пĕр-пĕрин çырăвĕсене вуласа киленеççĕ, иртсе кайнă савăнăçлă кунсене аса илеççĕ, пуласси пирки ĕмĕтленеççĕ. Çаплаччĕ...

Çак тĕле çитсен Ольга Степановна шăпланчĕ, палăрмаллах чĕтрекен аллипе кăвакарнă çӳçпуçне майларĕ. Кăштахран, хăйне алла илсе лăплансан, калавне малалла тăсрĕ:

– 1945 çулхи кăрлач уйăхĕнче пирĕн полк Остроленко хули çывăхне çитсе чарăнчĕ. Пире Нарев юхан шывĕ урлă хывнă кĕпере сыхлама хушрĕç. Хамăр ума лартнă тĕллеве эпир хальлĕхе чыслăн пурнăçларăмăр-ха: кĕпере аркатма килнĕ тăшман самолечĕсене зениткăсенчен пере-пере каялла хӳтертĕмĕр, хăшĕ-пĕрне персе те ӳкертĕмĕр... Темлерен, пĕр лăпкă кун, Клавăпа комсомолецсен пухăвне кайма тухрăмăр. Иксĕмĕр те хаваслă, кăмăл çĕкленӳллĕ. Сăлтавĕ те пурах: анăçра кĕрлекен вăрçă вĕçленсе пырать... Сасартăк хамăр хыçра Васильев лейтенант сассине уйăрса илтĕмĕр: «Ан васкăр-ха, чиперккесем, пĕрле кайăпăр!» Эпир ахăлтатса-кулса малалла вирхĕнтĕмĕр. Нумаях та чупайманччĕ – ура айĕнче мина çурăлнине, хама темĕнле хăватлă вăй çĕртен уйăрса сывлăша çĕкленине туйса илтĕм – урăх нимĕн те ас тумастăп...

Виçĕ кунран тин Белосток госпиталĕнче тăна кĕрет Ульха.

Куçне уçсан хăй умĕнче шурă калпаклă ватăрах арçын тăнине курчĕ.

– Турра шĕкĕр, «вăранчĕ»! – терĕ лешĕ хăйĕнпе юнашар тăракан хĕрарăма.

Çав тухтăрах тепĕр кунне Ульха çумне пырса ларчĕ, асăрханса алăран тытрĕ:

– Тӳс, хĕрĕм, усал хыпар пĕлтеретĕп: гангрена пуçланнă сан...

Эх, этем чĕри! Мĕнрен тунăши сана? Йывăç çĕрет, чул ванса тĕпренет, тимĕр тутăхать – эсĕ вара мĕн те мĕн, юлашки юн тумламĕчченех тапатăн!

Тинтерех çеç çирĕм урлă каçнă хĕр умне тăван уй-хир, ем-ешĕл улăх-çаран тухса выртрĕç. Çамрăксен картине тăрса утă çулни, кĕрхи уçланкăра сарă-кĕрен çулçăсене чаштăрттарса чупни аса килчĕ.

– Операцие килĕшетĕн-и? – лăпкăн, питех те лăпкăн! – ыйтать хирург. – Ăнлан, хĕрĕм, урăхла май çук...

Ульха ăнланать. Анчах та мĕн тума ăна, урасăр юлсан, пурăнăç? Кама кирлĕ пулĕ вăл, кама усă кӳрĕ?

Тухтăр çаплах унăн татăклă сăмахне кĕтет. Сӳрĕк вăл, сулхăн. Нивушлĕ чун çук унăн? Тен, Ульха «çемçешкеленни» килĕшмест ăна? Ун алли витĕр тухнисем пурте вăйлă, тӳсĕмлĕ çынсем пулнă ĕнтĕ. Апла тăк вăл та, Ульха та, чăтма тивĕç. «Пурнăç иккĕ килмест, унăн кашни саманчĕшĕн кĕрешмелле», – çапларах çырнăччĕ пулас Николай Островский. Чăн та, кĕрешӳсĕр пурнăç çук!

– Килĕшетĕп. Хăть те мĕн тăвăр, – тет те Ульха хуллен, пăчăртанса тухнă куççуль тумламĕсене кăтартас мар тесе тепĕр еннелле çаврăнса выртать.

...Кĕтнĕ çĕнтерӳ! Уксах-чăлахпа тулнă госпитале те хĕвел ăшши илсе кĕчĕ вăл. Палатăри хĕрсемпе пĕрле Ульха та савăнĕччĕ. Анчах... чĕркуççинчен çӳлерех татнă урисене «хыпаласа» пăхать те – пуçне аллипе çатăрласа минтер çине тăрăнать.

Çак йывăр та асаплă тапхăра тӳссе ирттерме ăна çырусем пулăшрĕç. Чебукова ячĕпе вĕсем госпитале килкелесех тăчĕç – пĕрле çапăçнă юлташĕсенчен, Клавăран...

Тантăшĕн юлашки хыпарне Ульха 1946 çулта – Мускаври наукăпа тĕпчев институтĕнче выртнă чухне – Саратов хулинчен илчĕ. Клава бухгалтерсен курсне пĕтернĕ иккен, халь хăй тĕллĕн ĕçлет.

Килĕнчен килекен çырусене яланах пăлханса уçать Ульха. «Мĕн пулнă сана, хĕрĕм? Ма халĕ те кăлармаççĕ?» – ыйтать амăшĕ кашнийĕнчех. «Ним те пулман, кĕçех çитетĕп», – йăпатать ăна Ульха. Хăй вара... Темиçе кун каярах сылтăм урине каллех – миçемĕш хут ĕнтĕ! – операци турĕç. Мĕнле иртсе кайĕ, мĕнпе вĕçленĕ – кăна пĕр турă кăна пĕлет. Тен... Кун пирки шухăшлани чĕрене мăка çĕçĕпе сĕрнĕ пекех ыраттарать. «Ан кулян, Маресьевран та çăмăлрах ташлакан пулатăн!» – теççĕ тухтăрсемпе сестрасем. Лăплантараççĕ ĕнтĕ. Кирек епле пулсан та пуçа усма юрамасть!

...Яла вăл хăйне ăсатма килнĕ сестрапа пĕрле каç кӳлĕм çитрĕ.

Альтук аппа малтан – кĕрсенех – хăй çине мĕнле хăрушă инкек йăтăнса аннине пĕлмерĕха. Кăштахран, кĕтнĕ хĕрĕ мĕншĕн туя вĕççĕн, йывăррăн утнине тавçăрса илчĕ те... Çук, ӳлемерĕ вăл, тӳсрĕ. Шывланнă куçне тутăр вĕçĕпе шăлса типĕтрĕ те тĕп сакайне анчĕ, кăкшăмпа сăра ăсса тухрĕ.

Чылайччен каласса ларчĕç вĕсем, амăшĕпе хĕрĕ: çур çĕр иртсен кăна çывăрма выртрĕç. Апла пулин те ыйхă килмерĕ – хĕр салтака салхуллă та хурланчăк шухăшсем канăç памарĕç. Латви çĕрĕ çинче – Çĕнтерӳччен çур çул маларах çеç! – пуç хунă ашшĕ аса килчĕ. Вăл таврăннă пулсан, паллах, çăмăлрах пулĕччĕ. Халь вара акă кашни кĕтесрех – çитменлĕхпе йывăрлăх. Ахаль те аран-аран кăна сыпăнтаркаласа пыракан çемьене тепĕр ытлашши çăвар хутшăнчĕ. Çук, çын ĕнси çинче лармĕ Ульха!

Тепĕр темиçе кунтанах вăл, амăшĕ ӳкĕтлени-хирĕçленине пăхмасăр, правление çул тытрĕ.

Виçĕ çул шут ĕçĕнче тăрăшрĕ. Каçсерен протезĕсене хывса ыратакан пĕç тĕпĕсене компресс турĕ.

...1949 çул. Колхоз правленийĕ пуш-пушах: ĕççи, пурте вырмара. Ульха тинтерех çеç уй-хиртен килсе çитнĕ председатель патне пычĕ те:

– Кузьма Емельянович, вăхăтлăха ĕçрен хăтармăр-ши? – терĕ.

– Мĕн, каллех уру сурма пуçларĕ-им? – ыйтăва ыйтупа тавăрчĕ Суранов. – Каларăм вĕт-ха сана, çуран ан çӳре терĕм. Паянах бригадира хушатăп: ирпе лашапа пырса илтĕр, каçхине леççе хутăр.

– Ĕç-пуç урара мар, Кузьма Емельянович, – хирĕçлерĕ хĕр. – Экзаменсем тытма каясшăн эпĕ...

– Мĕнле экзамен? Ăçта? – тĕлĕнчĕ колхоз ертӳçи.

– Канаша. Кăçал унта учительсем хатĕрлекен институт уçнă. Илтнĕ пуль?

– Илтнĕ, пĕлетĕп. Анчах епле-ха капла... Пĕр кĕтмен-туман çĕртен... Лар-ха, пĕрле шухăшласа-канашласа пăхар: пĕр пуç – лайăх, иккĕ тата аванрах теççĕ. Учитель ĕçĕ, паллах, кирлĕ, хисеплĕ ĕç. Анчах та уншăн мĕн чухлĕ вăйхал, тӳсĕмлĕх хумаллине пĕлетĕн-и эсĕ? Ман шухăшпа, Ольга Степановна, сан вырăну кунтах. Килес çул акă бухгалтерсен курсне вĕренме ярăпăр...

– Çук, Кузьма Емельянович, тахçанхи ĕмĕтĕме татма-хуçма пултараймастăп.

– Апла тăк хăвăнне ху пĕл. Темле ярас килмесен те вăйпа тытса тăмастăп, – терĕ председатель.

Эрнерен-мĕнрен Чебуковăна ăнăçлăх сунса Канаша ăсатрĕç.

Тата икĕ çултан вăл, преподаватель дипломне хӳтĕлесе, тăван ялне таврăнчĕ.

Шкул сăртра ларать. Ваçинке кассинчен унта çитме çур çухрăм. Инçе те, çывăх та мар – шăп та лăп пĕр сехет утмалăх.

Вĕрентекенсен пӳлĕмне кĕриччен малтан Ольга Степановна кăвар пек тĕлкĕшекен пит-куçне çиле хирĕç тăрса уçăлтарать, сиксе тухасла тапакан чĕрине лăплантарать...

Шкултан килсен çамрăк учительница вак-тĕвек ĕçсем тăвать. Каçхи апат хыççăн вăрахчен ыранхи уроксене хатĕрленет, кĕнеке-журнал, хаçат вулать.

Тӳсеймест Альтук аппа, аннесен йăлипе çемçен мăкăртатать:

– Пĕртте шеллеместĕн хăвна, хĕрĕм. Питех ĕçлес килет тĕк çăмăлрах çĕре куç...

Чĕнмест Ульха, шарламасть: тӳсме пултараймасть вăл хăйне шелленине. Тепĕр çынна пулсан çур сăмахранах татса хурĕччĕ, анчах та анне – аннех.

Вăхăт шурĕ. Кĕçех Ольга Степановнăна собес урлă тӳлевсĕр машина пачĕç. Çук, лармарĕ вăл унта – ял-йышран именчĕ.

Çул хыççăн çул иртрĕ. Темлерен яла çĕнĕ хыпар сарăлчĕ: Альтук хĕрĕ Ульха – Ольга Степановна – Шупашкарти педагогика институтĕнчен хăй тĕллĕн – куçăмсăр майпа – вĕренсе тухнă! Сиккассисем кăштах каласкаларĕç те – каллех лăпланчĕç: Чебуковсенчен тем те кĕтме пулать.

...Пăхатăп та ун çине – тĕлĕнетĕп: мĕнле шăнăçать-ши унра, çак лутрарах та типшĕмрех хĕрарăмра, çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал? Мĕн чухлĕ авман-лăскаман пуль ăна кăра шăпа – вăл вара çав-çавах хуçăлман, çав-çавах чĕрĕ те пиçĕ.

«Пурнăçа хаклама пĕлет вăл, тăван халăхăмăра юратать – акă ăçта унăн ватлăхпа чир-чĕре парăнман çирĕплĕхĕ, чун-чĕре хĕрӳлĕхĕ!» – çапла шухăшларăм унпа сыв пуллашнă май.